## Содержание

Новогодняя сказка
Çĕнĕ çул юмахĕ

## Новогодняя сказка

Сказка приходит тогда, когда её очень ждёшь. Но ступает она тихо, стучится еле слышно. Пронесётся мгновенье и, если ты её не заметил, Сказка уйдёт в другой дом. Чему тут удивляться? Привычки у них такие.

В ту ночь Сказка постучалась в комнату Даши. Заметив, что дверь не заперта, вошла в комнату. Даша же не знала, что с ней должно было произойти что-то чудесное. Девочка спокойно спала. У первоклассницы так много забот, устала за день. Даша улыбалась во сне. Сегодня днём она отправила письмо Деду Морозу, а сейчас ей снилось, что он читает её письмо и пьёт чай из пузатого самовара.

А Сказка постояла у кровати Даши, обиделась и ушла. Не волнуйтесь, далеко уйти она не успела, её заметил Домовёнок, который охраняет дом и по ночам не спит. Он знает, что в последние ночи декабря, перед самым Новым годом, по городу гуляют новогодние сказки. Их надо просто ждать и дверь им открывать. Тогда и сам можешь попасть в одну из них. А Домовёнку не терпелось попасть в какую-нибудь сказку, ему только подавай приключения и путешествия.

– Здравствуй, Сказка! Постой, не уходи! Скажи, пожалуйста, можно ли в твою страну попасть?

– Нет ничего проще: научись делать чудеса своими руками и сотвори чудо для тех, кто рядом с тобой.

С этими словами Сказка растаяла в темноте комнаты, а Домовёнок ещё некоторое время пытался разглядеть её.

В это время огромная зелёная Ель, наклонив верхушку, бочком протиснулась в комнату. Какой же Новый год без ёлки? Эта новогодняя гостья особенно нравится детям. Потом они целый год вспоминают запах хвои, блестящие ёлочные игрушки, сверкающие гирлянды и подарки, найденные под зелёными ветвями.

Ёлка – это один из символов новогоднего праздника и, конечно же, хороший подарок. Зелёная Ель достала из-под многочисленных оборок маленькую ёлочку и протянула её Домовёнку. Вдруг из Ели высунулась грязная рука с нестриженными ногтями и некто завопил:

– Моё! Отдай! Уши оборву!

– Кто ты? – спросил Домовёнок.

– Тебя не касается! Сам-то кто? Что здесь делаешь? – кричал некто, не вылезая из Ели.

– Я охраняю дом. Хочу первым встретить Новый год, а ещё я хочу попасть в новогоднюю сказку, – признался Домовёнок.

– Ещё чего?! Зачем его встречать? Сам придёт, не маленький! – возмутился некто из Ели. – Лучше разбуди эту малявку, я вас в гости приглашу! – произнес некто, показывая пальцем на спящую Дашу.

– Прежде чем приглашать, неплохо бы показаться, в доме прибраться, да угощение для гостей приготовить!

– Вот ещё! – Некто вылез из Ели и оказался Бабой-ягой довольно приятной наружности. Общий вид портили только бигуди, которые она забыла снять, собравшись в дорогу. Впрочем, Бабу-ягу это обстоятельство не смущало. Она была абсолютно уверена в своей неотразимости. – С угощением проблем не будет. Возьмём с собой эту мелкую, – сказала Баба-яга. – В каком виде предпочитаешь: отварную или жареную? Ешь, сколько влезет.

Домовёнок был возмущён. Но Баба-яга то ли этого не замечала, то ли не хотела замечать. Она продолжала говорить о своих планах, о том, что в её доме чистота и порядок,

потому что мусорить некому. Но когда она призналась, что несколько лет назад поссорилась с Дедом Морозом, Домовёнку стало жаль Бабу-ягу. Вот почему её всегда прогоняют с праздника! А вдруг она исправилась?

Рассказ Бабы-яги прервал ёж Егор, спустившийся с Ели на разноцветной гирлянде. (Оказывается, очень полезная вещь. Хочешь, я научу тебя делать гирлянды? Это очень просто. Ничего сложного. Лучше всего делать с друзьями, тогда работа пойдёт быстрее, а гирлянда будет длиннее. Попробуем?)

– Привет, я – ёж Егор. Давайте знакомиться.

– Домовёнок я. Живу в этой квартире.

– А я – Снегурочка! – нахально соврала Баба-яга. Но кого она пыталась обмануть?! Ей никто не поверил.

– Ты старая и выглядишь смешно, тебе, наверно, лет двести, – сказал ёж Егор.

Любая женщина обиделась бы, но не Яга. Всё, что было сказано, она приняла как изысканный комплимент и только похихикала в ответ. Лучше выглядеть смешно, чем страшно. А когда женщине уже четыреста двадцать, хотя уточнения излишни, то, что она выглядит на двести, может только льстить. Но хитрая Баба-яга не стала ждать дальнейших разоблачений. У неё были совершенно другие планы на вечер. Она тихо удалилась.

– Фу, подумаешь! – крикнул ежонок ей вслед.

– Ты был невежлив с ней, так нельзя, – сделал замечание Домовёнок.

– А она сама... А чего она, – продолжал ёж Егор.

– Лучше расскажи о себе. Как ты сюда попал?

– Очень просто. Из сказки. Мы с зайцем Семёном договорились здесь встретиться. Кстати, пушистый друг ещё не приходил?

– Кто?

– Заяц. Такой весь беленький, с длинными ушами. Сейчас покажу. (Егору показалось проще сделать зайца из бумаги. Может, и мы попробуем?) Мы собирались в гости к Снегурочке. Поможем ей разложить подарки и будем ждать прихода Деда Мороза. Сегодня утром я получил от неё приглашение, продолжал хвастаться ёж Егор. Не успел он дочитать приглашение, как в комнату ворвался запыхавшийся заяц.

Прямо с порога он завопил:

– Привет! Привет! Сколько зим, сколько лет! Молодец, что дождался меня. Я тоже получил приглашение от Снегурочки. Наша Снегурочка – настоящая морковка! – едва сумел выговорить заяц, дожёвывая морковку.

– Чего-чего? – переспросил ёж.

– Колючая ты голова! Морковка – это лучший комплимент! Кстати, нам пора.

– Может, и ты с нами? – пригласил Домовёнка ёж.

– Спасибо за приглашение. Но, пожалуй, я останусь. Вдруг Даша проснётся, а меня нет. Кто ей расскажет, как появилась в её комнате эта Ель, – вежливо отказался Домовёнок.

Заяц и ёж ушли, а Домовёнок заметно погрустнел. Очень уж ему хотелось побывать в новогодней сказке. Он решил разбудить Дашу и вместе с ней отправиться к Снегурочке.

А в это время в доме Снегурочки хозяйничала Баба-яга. Каким обманом удалось ей проникнуть в дом – неизвестно, но она вела себя в нём как истинная хозяйка. С момента последней встречи Яга заметно преобразилась. Как много может изменить в женщине причёска и макияж. Не зря колдовала над Бабой-ягой Кикимора, лучший визажист местного болота. Надо признать, что Яга была женщиной без возраста: выглядела так, как было ей нужно. Она умела произвести впечатление на любого. В такие минуты её серые глаза становились бездонными, а черты лица обретали какую-то мягкость. Сам Дед Мороз пытался за ней ухаживать. Но почему-то они поссорились. Влюблялась ли она сама? Это неизвестно. Баба-яга возилась с самоваром и про себя бормотала:

– Я поставлю самовар, сделаю из трав отвар, Деда Мороза усыплю, потом, может, вовсе привороржу. Не виновата я в том, что люблю. Просто душистого чая налью, чтобы взглянул наконец на меня, чтобы он вспомнил: на свете есть я!

В этот момент в дверь постучали. Яга подбежала к зеркалу, поправила причёску, одёрнула шубку и открыла дверь. На пороге стояли заяц Семён и ёж Егор. Баба-яга

раскричалась и решила прогнать нежданных гостей метлой.

– Кто такие?! Вас я точно не ждала!

– Приглашение получили мы вчера.

Яга поняла, что сказала лишнее и решила быть помягче:

– Проходите, дорогие гости! Не со зла я, а спросонья просто...

Баба-яга спряталась за печкой. Главное – дождаться пока гости устанут ждать и уйдут сами. А заяц с ежом обсуждали оказанный им приём.

– Тебе не кажется все это странным?

– Тебе показалось? А мне и подавно! Ты вспомни-ка, ёжик, ну разве бывало, чтоб в нашем лесу так гостей принимали?..

На столе стояли две чашки с душистым чаем. Баба-яга приготовила их для Снегурочки и Деда Мороза. Заяц и ёж решили, что чай приготовлен для них. Но, выпив его, ощутили странную сонливость.

– Чай вкусен и сладок! В нём запахи лета, в нём краски цветов под солнечным светом...

– Что есть в этом чае я, честно, не знаю, но я засыпаю...

– И я засыпа-а-а-аю...

Яга выглянула из-за печки и увидела, что гости спят. Нужно немедленно их разбудить и выпроводить за дверь. С минуты на минуту придёт Дед Мороз. Она толкала, щипала, кусала спящих гостей. А зайца и ёжика уже ничто не могло сдвинуть с места. Чая в самоваре ни капли не осталось. Очередной план Бабы-яги рухнул! Оставалось только одно: спасаться бегством. Баба-яга металась по комнате.

– Что делать? Что делать?! Куда мне бежать, чтоб гнева Мороза хоть раз избежать? Какой мне дорогой сегодня пойти, чтоб только не встретить его на пути?

Всё это происходило в сказке. А в комнате Даши горел свет, и Домовёнок рассказывал новогоднюю сказку. Самое начало, что произошло с зайцем и ёжиком, он ещё не знал.

– А как мы попадём в сказку? – спросила Даша.

– Нам должен помочь какой-нибудь сказочный герой, например, наша Ель, – ответил Домовёнок.

– Должна вас огорчить, я сказочная только наполовину. Сказочным было только моё появление в вашей квартире, а в остальном я самая обыкновенная. Сказка начинается только тогда, когда на моих ветках появляются игрушки: разноцветные шары, гирлянды, фонарики, сказочные герои, заснеженные домики. И когда надо мной пройдёт золотой и серебряный дождь – появится Дед Мороз, зажжёт на мне огни и начнётся праздник, – со вздохом сказала Ель.

– Но мы можем сами украсить ёлку! – воскликнул Домовёнок.

Вскоре на ёлочке появились игрушки.

– Теперь я чувствую в себе волшебную силу, – сказала Ель.

– И это значит, что мы можем отправиться к Снегурочке! – обрадовалась Даша.

В комнату ворвался рой ослепительно белых снежинок. Ель закружилась по комнате. Даша и Домовёнок, словно на ракете, помчались на ней в сказку. Они летели по зимнему лесу. Звёзды были так близко, что казалось: протяни только руку – и они окажутся на ладони. Крупные снежинки похожи на звёзды. Они падали, но падали, словно звёзды. Сказочно! Ради таких мгновений и хочется попасть в сказку.

Ты когда-нибудь замечал такое? Думаю, что да.

У ворот в волшебную страну зимних сказок Ель остановилась. Снеговик, сторожививший ворота, требовал приглашение – снежинку. Домовёнок вырезал снежинку для себя и для Ели, а Даша справилась с заданием сама. Вот так.

Ель помчалась дальше и вскоре остановилась у дома Снегурочки. В это же время с северной стороны летели к дому сани Деда Мороза. В санях сидели Дед Мороз, Снегурочка и два гнома. Все они спешили на ёлку.

Сани и Ель остановились у самого крыльца. Дед Мороз достал ключи, но дверь была открыта. За столом спали заяц и ёж. Снегурочка и Домовёнок пытались их разбудить, но у

них не получилось. Дед Мороз завёл часы, и волшебная кукушка разбудила спящих гостей.

Удивительно, но ни заяц Семён, ни ёж Егор ничего не помнили. Все зашумели, занялись уборкой и готовкой. До праздника оставалось ещё несколько часов. Дед Мороз стоял у окна и любовался морозными узорами. На этот раз он решил позвать на праздник и Бабу-ягу. Сколько же можно на неё сердиться! А тётка она компанейская, много песен знает. Не прячется по углам, стенки не подпирает. Умеет веселиться сама и веселить других. Самое место ей на празднике. Дед Мороз ещё ничего не знал о её сегодняшних проделках. И не расскажем. В этом году обиженных на неё нет. Пусть Баба-яга повеселится!

На этом я закончу свой рассказ о том, как Даша и Домовёнок попали в новогоднюю сказку. Ничего сложного нет. Теперь и ты знаешь эту дорогу. Сотвори чудо своими руками. Ты уже многому научился с героями этой истории. Домовёнок и Даша сумели осуществить свою мечту. Попробуй и ты. Я знаю, что всё обязательно получится.

## Çĕнĕ çул юмахĕ

Питĕ хытă кĕтсен Юмах килех килет. Анчах вăл шăппăн-шăппăн утать, алăка асăрханса шаккать. Сиссе ĕлкĕрейместĕн тĕк самантрах урăх киле каять. Мĕн тĕлĕнмелли пур: вĕсен йăли çапла.

Пĕр каçхине Юмах Даша пурăнакан пӳлĕм алăкне пырса шаккарĕ, ăна питĕрменнине кура шала кĕчĕ. Çак каç асамлă пулнине хĕр ача ăçтан пĕлтĕр-ха? Вăл лăпкăн çывăрать. Пĕрремĕш класра вĕренекенсен ĕç çав тери нумай, кун каçиччен хĕр ача ывăннă. Ыйхă тĕлĕшпе ун тути йăл кулать. Паян кăнтăрла вăл Хĕл Мучи патне çыру çырнăччĕ. Çыру ун патне çитнĕ пек. Çап-çаврака сăмавар умĕнче чей ĕçсе ларнă май Хĕл Мучи Даша çырăвне вулать пек.

Юмах хĕр ача кравачĕ умĕнче чылай тăчĕ. Даша вăранмарĕ. Кӳреннĕ Юмах пӳлĕмрен тухса утрĕ. Ан кулянăр, аякка кайса ĕлкĕреймерĕ вăл. Ăна Хĕрт-сурт тĕл пулчĕ. Кил хуралçи вăл, çĕрле те çывăрмасть. Çĕнĕ çул уявĕ умĕнхи каççенче урамсем тăрăх Юмах çӳренине вăл пĕлет. Вĕсене кĕтмелле, алăк уçса кĕртмелле. Вара хăв та пĕр-пĕр юмах тĕнчине лекме пултаратăн. Хĕрт-сурт тахçантанпах Юмах çĕршывĕнче пулса курма ĕмĕтленет. Çулçӳрев, мыскара тесен вăл каççах каять.

– Эсĕ-çке ку, Юмах! Тăхта-ха, тухса ан кай! Кала-ха, тархасшăн, Юмах çĕршывне чăнах та лекме пулать-и?

– Пулать паллах. Унта лекме йывăр мар. Çывăх çыннусем валли хăвăн аллупа асамлă япаласем туалла кăна.

Çапла каларĕ те Юмах çĕрлехи тĕттĕм пӳлĕмре пăсланса çухалчĕ. Темле тинкерсе пăхсан та Хĕрт-сурт ăна урăх курмарĕ.

Çак вăхăтра пӳлĕм алăкĕнчен симĕс Чăрăш: пуçне пĕксе хĕсĕнсе кĕчĕ. Унсăр мĕнле Çĕнĕ çул пултăр? Уйрăмах ачасем юратаççĕ Çĕнĕ çулăн çак хăнине. Кайран вара вĕсем çулталăк тăршшĕпех унăн ырă шăршине, илемлĕ теттисене, симĕс лăсă айĕнче парне тупнине аса илсе пурăнаççĕ.

Ёлка вал – Çĕнĕ çул илемĕ, хăех тем пысăкăш парне. Симĕс Чăрăш хутлă-хутлă кĕпе аркинчен пĕчĕкçĕ чăрăш туртса кăларчĕ те Хĕрт-сурта тăсса пачĕ, Çак самантра Чăрăш лăссисем хушшинчен такамăн таса мар алли курăнса кайрĕ. Чĕрнисем вăрăм хăйĕн.

– Ку манăн! Пар! Хăлхуна касса татăп! кăшкарса ячĕ хайхискер.

– Кам эсĕ? – ыйтрĕ унран Хĕрт-сурт.

– Сана мĕн ĕç? Ху кам? Мĕн тăватăн кунта? – кăшкăрать такам Чăрăш лăссисем хушшинчен.

– Эпĕ – кил сыхлакан. Çĕнĕ çула пуринчен малтан кĕтсе илесшĕн. Тата манăн Çĕнĕ çул юмахĕнче пулса курас килет, – терĕ Хĕрт-сурт хăйĕн ĕмĕтне пытармасăр.

– Кирлех пуль! Мĕн кĕтсе тăмалли пур ăна? Хăех килет. Пĕчĕк мар вĕт! Луччĕ эс ав çав шĕвĕрккене вăрат, вара сире хăнана илсе каятăп, – çывăракан Даша енне пӳрнипе тĕллерĕ ёлка ăшĕнчи такам.

– Хăнана чĕниччен малтан тухса хăвна кăтарт-ха. Килӳнте тирпейлесен те пăсмасть. Хăнасем валли кучченеç те хатĕрлемелле.

– Шутсăр кирлĕ пуль! – текелесе хайхи такам ёлка ăшĕнчен йăшăлтатса тухрĕ те Ашапатман карчăк пулчĕ тăчĕ. Аптрамасть пек хăй. Пуçĕ çинчен илсе пăрахма маннă бигудисем çеç сăнне кулăшла кăтартаççĕ. Анчах ку Ашапатманшăн хăйне хăй тиркемелли сăлтав мар. Хăй илĕртӳллĕ пулни ана пачах та иккĕлентермест. – Кучченеç пирки ним кулянмалли те çук. Акă çак вĕттине илсе каятпăр та – хуть пĕçерсе, хуть ăшаласа пама пултаратăп. Çи те çи.

Куна илтсен Хĕрт-сурт тарăхсах кайрĕ. Анчах та Ашапатман çакна те курмарĕ, те курасшăн пулмарĕ. Вăл калаçрĕ те калаçрĕ. Унăн килĕнче çӳпĕлекен çук иккен, çавăнпа яланах таса та тирпейлĕ-мĕн. Ашапатман темиçе çул каяллах Хĕл Мучипе вăрçăнса кайнине пĕлтерсен Хĕрт-сурт ăна хĕрхенсех кайрĕ. Авă мĕншĕн ăна уявран пĕрмаях хăваласа яраççĕ иккен. Тен, вăл хăйĕн айăпне ăнланса илнĕ те тӳрленнĕ?..

Ашапатман сăмахне Чăрăш çинчи тĕрлĕ тĕслĕ сăнчăр тăрăх шуса аннă чĕрĕп татрĕ. (Ку сăнчăр илемлĕ çеç мар, усăллă та иккен. Кăмăлу пулсан сана та çак сăнчăра çыхма вĕрентĕп. Ку питĕ ансат ĕç. Ним йывăрри те çук. Юлташусемпе пĕрле тусан лайăхрах: ĕç хăвăртрах каять, сăнчăр та вăрăмрах пулать. Тытăнса пăхар-и?)

– Салам. Паллашар-и? Эп Йĕплĕ Якур ятла.

– Мана Хĕрт-сурт теççĕ. Çак хваттерте пурăнатăп.

– Эпĕ вара – Юр пике, – намăса пĕлмесĕр суйрĕ Ашапатман. Кама улталасшăн-ши? Ун сăмахне, паллах, никам та ĕненмерĕ.

– Эсĕ питĕ кулăшла тата ватă курăнатăн, ик çĕр çула çитнĕ пекех, – терĕ ăна Йĕплĕ Якур.

Ик çĕр çулта тенĕшĕн кирек мĕнле хĕрарăм та кӳренĕччĕ. Ашапатман вара кулянма та шутламарĕ, хăйне ăшă сăмах каланăн хихиклетсе илчĕ кăна. Кулăшла курăнни сăнсăр курăнни мар вĕт. Тăват çĕр çирĕм çула çитнĕскерне ик çĕр çултипе танлаштараççĕ пулсан илемне çухатман-ха апла вăл. Чее Ашапатман суйине тăрă шыв çине кăларасса кĕтсе тăрас çук-ха. Унăн паянхи тĕллевĕсем пачах урăхла. Хайхискер пӳлĕмрен шăппăн-шăппăн тухса шăвăнчĕ.

– Тупăннă кунта! – кăшкăрса ăсатрĕ ăна Йĕплĕ Якур.

– Эсĕ ăна хисеплемесĕр калаçрăн, апла юрамасть, – асăрхаттарчĕ Хĕрт–сурт.

– Хăйне пĕл-ха... Мĕншĕн çапла хăтланать вăл? – вĕчĕрхенчĕ чĕрĕп.

– Юрĕ-çке. Хăв çинчен каласа пар. Кунта мĕнле лекрĕн?

– Çăмăллăнах. Юмахран килтĕм. Çăмлă Çимунпа çакăнта тĕл пулма калаçса татăлнă эпир. Çăмлă тус çитеймерĕ-и-ха?

– Кам?

– Куян, ара. Шап-шурă кĕрĕклĕскер, вăрăм хăлхаллăскер. Çиччас кăтартап вăл мĕнлине. (Йĕплĕ Якур хутран куян кĕлеткине туса кăтартать. Атя эпир те туса пăхатпăр.) Эпир Юр пике патне хăнана кайма пуçтарăннăччĕ. Ăна парнесене вырнаçтарса хума пулăшăпăр, унтан Хĕл Мучи килессе кĕтĕпĕр. Паян ирхине вăл ман пата йыхрав хучĕ янă, – мухтанчĕ Йĕплĕ Якур. Вăл йыхрав хутне вуласа та пĕтереймерĕ, пӳлĕме куян пашкаса çитсе кĕчĕ, алăкранах хаваслăн кăшкăрса ячĕ:

– Салам! Салам! Курманни нумай пулать! Тавтапуç кĕтсе тăнăшăн. Юр пике мана та хăнана чĕннĕ. Ах, хитре–çке Юр пике, сăнĕ-пуçĕ кишĕр пек! – аллинчи кишĕр юлашкине качăртаттарса кăшланă май хăлаçланчĕ Çăмлă Çимун.

– Мĕн терĕн çак эс? – тĕлĕнсех кайрĕ чĕрĕп.

– Йĕплĕ пуç! Кишĕрпе танлаштарни чи хитрине пĕлтерет. Сăмах май каласан, пирĕн кайма вăхăт.

– Тен, эсă те пирĕнпе пыратăн? – йыхравларĕ кил хуралçине Йĕплĕ Якур.

– Тавтапуç чĕннĕшĕн. Манăн кунта юлмалла. Сасартăк Даша вăранĕ те, эпĕ вара кил те çук. Çак Чăрăш ун пӳлĕмне епле килсе леккине ăна кам каласа парĕ? – сăпайлăн тавăрчĕ Хĕрт–сурт.

Куянпа чĕрĕп тухса кайсан Хĕрт-сурта тунсăх пусса илчĕ. Çĕнĕ çул юмахне çав тери çитсе курас килетчĕ унăн. Хайхискер Дашăна вăратса Юр пике патне унпа пĕрле кайма тĕв турĕ.

Ашапатман çак вăхăтра Юр пике килĕнче хуçаланчĕ. Мĕнле майпа пӳрте кĕме

пултарнӑ вӑл – паллӑ мар, анчах унта чӑн–чӑн хуҫа пек ҫӳрерӗ. Юлашки хут курнӑранпа вӑл палӑрмаллах улшӑннӑ. Ҫӳҫне тирпейлесен, сӑрлансан хӗрарӑм чиперленетех ҫав. Ҫывӑхри шурлӑхра пурӑнакан Кикимора тухатлани те пулӑшнӑ пулас ҫамрӑкрах курӑнма. Ашапатман миҫерине куҫпа пӑхса пӗлме те ҫук. Миҫе ҫул та пулас килет, ҫав ҫулти пек курӑнма пултарать вӑл. Такамӑн пуҫне те ним мар ҫавӑрса ярать.

Ҫавӑн пек самантсенче Ашапатманӑн тӗссӗр куҫӗ тӗпсӗр кӳлӗ пек курӑнать, сӑнӗ йӑвашланать. Тахҫан авал Хӗл Мучи те ӑна килӗштернӗ теҫҫӗ. Кайран иккӗшӗ тем пирки хирӗҫсе кайнӑ. Кинеми хӑй ҫамрӑк чух кама та пулин кӑмӑлланӑ-ши – куна никам та пӗлмест. Ашапатман сӑмаварпа аппаланнӑ, хӑйӗнпе хӑех калаҫнӑ:

– Ҫичӗ курӑкпа вӑр-вар эп вӗретрӗм сӑмавар. Хӗл Мучи ӗҫсе парсан хӑвӑрт кайӗ ҫывӑрса. Эп ун чух асамласа ӑна ярӑп ҫавӑрса. Ма курмасть-ши хыт чӗре: эп те пур вӗт тӗнчере.

Ҫак самантра алӑка такам шаккарӗ. Ашапатман тӗкӗр патне чупса пычӗ, кӗрӗк аркине турткаларӗ, ҫӳҫне якатрӗ, унтан алӑка пырса уҫрӗ. Пӳлӗме Ҫӑмлӑ Ҫимунпа Йӗплӗ Якур кӗрсе тӑчӗҫ. Ашапатман кӗтмен хӑнасене курсан янӑрашма, шӑпӑрпа сулкалашма пуҫларӗ:

– Камсем эсир? Сире кӗтмен эп хӑнана.

– Ӗнер эпир йыхрав хучӗ илнӗччӗ.

Ашапатман хӑй шухӑшламасӑр калаҫнине тавҫӑрса илчӗ те сассине ҫемҫетрӗ:

– Иртӗр, хаклӑ хӑнасем! Ыйхӑ тӗлӗшпе вырӑнсӑр сӑмах персе ятӑм, – терӗ те кӑмака хыҫне кайса пытанчӗ. Хӑнасем ӑна кӗтсе ывӑнӗҫ те, тен, хӑйсемех тухса кайӗҫ. Куянпа чӗрӗп вара хӑйсене мӗншӗн ҫапла кӗтсе илнине ниепле те ӑнланаймарӗҫ.

– Ытла та тӗлӗнмелле пулса тухрӗ мар-и?

– Эсӗ те ҫапла шухӑшлатӑн-и? Пирӗн вӑрманта хӑнасене ҫапла йышӑннине аставатӑн-и эс, Йӗплӗ Якур?

Хӑнасем сӗтел ҫинчи икӗ куркара чей пӑсланса ларнине асӑрхарӗҫ. Ашапатман вӗсене Хӗл Мучипе Юр пике валли тултарса лартнӑччӗ-ха. Куянпа чӗрӗп хӑйсем валли хатӗрленӗ тесе шутларӗҫ. Чей ӗҫнӗ хыҫҫӑн иккӗшӗ те шӑм-шак йывӑрланнине туйса илчӗҫ.

– Ах, тутлӑ та чейӗ. Унран вӑрманти чечексен шӑрши кӗрет, тӗсӗпе хӗрлӗ хӗвеле аса илтерет...

– Мӗн ярса вӗретнӗ – пӗлме ҫук, ҫывӑрас килет – чӑтма та ҫук.

– Манӑн та куҫ хупӑнсах анать...

Ашапатман кӑмака хыҫӗнчен пуҫне кӑларса пӑхре те хӑнасем ҫывӑрса кайнине курчӗ. Вӗсене часрах вӑратса пӳртрен кӑларса ямалла, мӗншӗн тесен кӗҫ-вӗҫ Хӗл Мучи килсе ҫитме пултарать. Ыйха путнӑ хӑнасене Ашапатман тӗртсе, ҫыртса, чӗпӗтсе пӑхать – лешсем вырӑнтан та тапранмаҫҫӗ. Сӑмаварта пӗр тумлам чей те юлман. Ашапатман мӗн шутласа хуни веҫ харама каять! Эх! Мӗн тӑвас? Тен, тухса тарас? Ашапатман унталла та кунталла кускалать.

– Мӗн тӑвас? Мӗн тӑвас? Хӗл Мучи ҫиллес пулас, ӑҫта тарса хӑтӑлас? Мучи хирӗҫ пуласран хӑш ҫулпа тарсан аван?

Ку пӗтӗмпех юмахра пулса иртнӗ. Даша пӳлӗмӗнче вара ҫап–ҫутах пулнӑ. Хӗрт-сурт хӗр ачана Ҫӗнӗ ҫул юмахӗ каласа панӑ. Пуҫламӑшне – Йӗплӗ Якурпа тата Ҫӑмлӑ Ҫимунпа мӗн пулса иртнине вӑл, паллах, пӗлме пултарайман.

– Юмаха мӗнле ҫитӗпӗр-ха эпир? – канӑҫсӑрланнӑ Даша.

– Пире юмахри пӗр-пӗр герой пулӑшӗ, тен, ҫак Чӑрӑш, – шанӑҫлӑн каланӑ Хӗрт-сурт.

– Сире пӑшӑрхантарма тивет: эпӗ ҫурма асамлӑ йывӑҫ кӑна. Сирӗн хваттере ҫеҫ юмахри пек кӗрсе тӑтӑм, ытти енчен илсен эп ахаль чӑрӑш ҫеҫ. Туратӑмсем ҫине илемлӗ теттесем: тӗрлӗ тӗслӗ шарсем, сӑнчӑрсем, хунарсем, чӗр чунсен кӗлеткисем, пӗчӗкҫӗ ҫуртсем ҫакса тултарсан ҫеҫ мана асамлӑх кӗрет. Лӑсӑсем тӑрӑх ылтӑн та кӗмӗл пайӑрка выляса тӑрсан, Хӗл Мучи килсе ман ҫинчи хунарсене ҫутсан вара уяв пуҫланать, – тенӗ Чӑрӑш ассӑн сывласа илсе.

– Эпир сана хамӑр та тӗрлӗ-тӗрлӗ теттесемпе илемлетме пултаратпӑр вӗт-ха! – савӑнса кӑшкӑрса яна Хӗрт-сурт.

Кӗҫех ёлка ҫинче теттесем курӑнса кайнӑ.

– Халӗ ӗнтӗ хамра асамлӑ вӑй вылянине туятӑп, – тенӗ Чӑрӑш.

– Апла тăк Юр пике патне кайма пултаратпăр! – савăнса кайнă Даша.

Çак самантра пӳлĕмре шурă-шурă лĕпĕшсем пек юр пĕрчисем вĕçме пуçлаççĕ. Пӳлĕм варринчи Чăрăш йăлтăртатса çаврăнать.

Дашăпа Хĕрт-сурт ракета çине ларнă пек вирхĕнсе асамлă юмах çĕршывне вĕçсе каяççĕ. Вĕсем хĕллехи вăрман тăрăх вĕçеççĕ. Тӳпери çăлтăрсем çав тери çывăхра курăнаççĕ: алă тăссах ывăçласа илме май пур тейĕн. Шултрарах юр пĕрчисем çăлтăрсем пекех. Вĕсем ӳкеççĕ те ӳкеççĕ. Юмахри пек! Çакăн пек илемлĕ самантсемшĕнех юмаха лекес килет.

Çакăн пек илеме хăçан та пулсан курнă-и эсĕ? Паллах, курнă.

Юмахсен асамлă çĕршывĕн алăкĕ умĕнче Чăрăш чарăнса тăчĕ. Ăна хураллакан Юр кĕлетке йыхрав билечĕ – шур хутран касса кăларнă юр пĕрчи – памасан алăка уçмасть. Хĕрт–сурт хăйне валли тата симĕс Чăрăш валли юр пĕрчи касса кăларчĕ, Даша та хăйне валли хăех йыхрав билечĕ ăсталарĕ. Вăт çапла.

Чăрăш малалла вĕçтерчĕ те Юр пике алăкĕ умне çитсе чарăнчĕ. Çак вăхăтра çурçĕр енчен килекен Хĕл Мучи çуни курăнса кайрĕ. Çуна çинче Хĕл Мучипе Юр пике тата икĕ гном ларaççĕ. Вĕсем пурте ĕлкăна васкаççĕ.

Çунапа Чăрăш крыльца умне çитсе тăчĕç. Хĕл Мучи çăраççи туртса кăларчĕ, анчах алăк уçах иккен. Йĕплĕ Якурпа Çăмлă Çимун сĕтел хушшинчех ыйха тăсаççĕ. Юр пикепе Хĕрт–сурт вĕсене вăратма тăрăшса пăхрĕç – кăлăхах. Вара Хĕл Мучи асамлă сехет тукмакне хускатса ячĕ те, пĕчĕк алăкран пуçне кăларнă куккук авăтса çывăракан хăнасене вăратрĕ. Тĕлĕнмелле: чĕрĕппе куян нимĕн те астумаççĕ. Пурте хаваслăн шавласа уява хатĕрленме пуçларĕç. Унччен темиçе сехет çеç юлнă.

Хĕл Мучи чӳрече умне тăнă та кантăк çинчи сивĕ эрешсемпе киленет. Хальхинче вăл Çĕнĕ çул уявне Ашапатмана та чĕнме шутларĕ. Мĕн çак таранччен çилленсе пурăнмалли пур. Кинемийĕ вăл хаваслăскер, мĕн чухлĕ юрă пĕлет. Кĕтесе кĕрсе хĕсĕнмест, юпа пек хытса тăмасть. Хăй савăнать, ыттисене те савăнтарать. Уявра ун пеккисем питĕ кирлĕ.

Ашапатман паян тунă мыскарасем çинчен Хĕл Мучи нимĕн те пĕлмест-ха. Каласа та памăпăр. Кăçал ун çине çилĕ тытса çӳрекен çук. Ыттисемпе пĕрле савăнтăрах Ашапатман!

Дашапа Хĕрт-сурта тата ыттисене Çĕнĕ çул юмахĕнче хăварса сăмаха вĕçлĕпĕр. Унта çитме йывăр мар. Халĕ эсĕ те çулне пĕлетĕн. Асамлăха хăвăн аллусемпе ту. Çак кĕнеке геройĕсем сана нумай вĕрентрĕç. Дашăпа Хĕрт-сурт хăйсен ĕмĕтне пурнăçа кĕртме пултарчĕç. Пĕлсех тăратăп: тăрăшсан санăн та пулатех.